Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

44 (7786) № * Юн кун, 2010 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 9-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Июнĕн 8-мĕшĕ – Социаллă ĕçченĕн кунĕ**

## Ĕçре – ырă кăмăлпа вашаватлăх



*Пирĕн районта çынсене социаллă пулăшу парас енĕпе ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕ ĕçлесе пырать. Çак пайăн тытăмĕнче социаллă пулăшу паракан центр пулни çăмăллăхсемпе усă куракансемшĕн пысăк тĕкĕ выраннех. Çак центр тĕрлĕ уйрăмсенчен тăрать. Унта вăй хуракан специалистсем тĕрлĕ категориллĕ çынсене патшалăх тивĕçтерекен çăмăллăхсем парассипе тимлеççĕ. Асăннă центрăн тытăмĕнче пĕтĕмпе 12 специалист тата 120 социаллă ĕçчен вăй хурать.*

*Патшалăх паракан тĕрлĕ йышши çăмăллăхсене тĕрлĕ категориллĕ çынсем районти хӳтлĕх пайĕ урлă илсе тăраççĕ. Ку енĕпе 9 çын тăрăшать паян пайра. Вĕсем хушшинче ачаллă çемьесене çăмăллăхсем парассипе ĕçлекенсем те: Татьяна Вячеславовна Мудрова, Светлана Николаевна Любимова тата Ольга Николаевна Воробьева (сăн ӳкерчĕкре). Çăмăллăхсем илессипе çыхăннă ыйтусемпе килекенсемпе вĕсем яланах ырă кăмăлпа, вашават калаçаççĕ. Хăйсен тивĕçне специалистсем туллин пурнăçлаççĕ.*

*Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.*

**Акатуй йыхравĕ: ӳс, çĕклен, Муркашăмăр!**

## Пĕрлехи ĕç туслă савăнăçа çаврăнчĕ

Умра тăракан йывăрлăхсене çĕнсех Муркаш ен хресченĕ хыçа юлнă çур акире çурхи уй-хир ĕçĕсен планне туллин пурнăçа кĕртрĕ. Мехелĕ çитрĕ ăна лартнă тĕллевĕсене пурнăçлама. Тавах ăна уншăн! Çавăнпа çур аки вĕçленнĕ ятпа ирттерекен ырă йăлари Акатуй та Муркашсемшĕн кăçал савăнăçлăрах та теветкеллĕрех иртрĕ.

Акатуй – çĕр ĕçченĕ çурхи ака-суха ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленине паллă тума, ĕçри паттăрсене тивĕçлипе чыслама халалланă ĕçпе юрă уявĕ. Ыранхи кунпа пурăнакан хресчен ăна нихăçан та манăçа кăлармасть. Манăçа кăларма çеç те мар, ака-суха ĕçĕсене тĕплĕ тишкерсе малашлăх çулĕсене уçăмлатать. Муркашсем те халăхăмăрăн çак йăлийĕркинчен юлас темерĕç. Ытти çулсенчи пекех кăçал та районăмăр çыннисем çĕр ĕçченĕн Акатуй уявне Лантăш вăрманĕн уçланкинче паллă турĕç. Акатуй савăнăçне вĕсем Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнине тата Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитнине халалларĕç.

Уява пуçтарăннисене малтанах район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ. Çавна май вăл районти çĕр ĕçченĕсем патшалăх паракан пулăшупа усă курма пĕлнине, çак çулпа кайса вĕсем ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тунине палăртрĕ.

– Çурхи ака-суха вĕçленни çĕр ĕченĕшĕн ял хуçалăхĕнчи чи ответлă ĕçсем пуçланнипе тӳр килет. Умра–акнă-лартнă культурăсене пăхса çитĕнтерессi, «симĕс ĕç çине» вăхăтра пурнăçласси, хыççăн кĕрхи ĕçсем т. ыт. те. Мĕн акни-лартнине тĕрĕстĕкел пăхса ӳстерсе çухатусемсĕр кĕлете пухса кĕртсен çеç эпир хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçларăмăр теме пултаратпăр. Çур акине агротехникăна пăхăнса ирттерсе çак çул çинчи пуçламăш утăма турăмăр та ĕнтĕ. Ака-суха ăнăçлă иртнипе эпир паян тивĕçлипех мухтанма пултаратпăр пулсан та кая хăвармасăр татса памалли ыйтусем те çук мар. Вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре те районти çĕр ĕçченĕ пĕр çын пек ĕçлессе шанатăп, – терĕ уява çул парса район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов.

Акатуй пĕтĕмлетĕвĕ уй-хир ĕçĕсене тишкерсе тухмасăр пулмастех. Телее, çак кунччен районти çĕр ĕçченĕ пĕрле пулса уй-хир ĕçĕсене танлаштарса хак пама та ĕлкĕрчĕ. Ĕçсем пĕтĕмĕшле агротехника требованийĕсемпе килĕшӳллĕн вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртнĕ. Çумăр çеç кирлĕ... Çурхи уй-хир ĕçĕсем тата Муркаш енри ял хуçалăх аталанăвĕ пирки пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.А. Калинин тĕплĕн те танлаштаруллăн, малта пыракансен тĕслĕхĕсене çиеле кăларса каласа пачĕ.

Çур акире районĕпе çурхи культурăсене 14,6 пин гектар çинче акнă тата лартнă. Вăл шутран тĕш тырă 11 пин гектар, пĕр çул ӳсекен курăксем 1406 гектар, силослăх культурăсем 280 гектар, пахча çимĕç 55 гектар, çĕр улми 1541 гектар йышăнаççĕ.

**(Малалли 2 стр.).**



*Çурхи ака-сухара район администрацийĕн дипломĕсене тивĕçнисен ушкăнĕ.*

**СОЦИАЛЛĂ СФЕРĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Сирĕн ĕç яваплă та пархатарлă. Хăвăр ĕçĕр халăхшăн пулнине пĕр самантлăха та манмастăр. Куллен вуншар ыйту татса панă май эсир кашни çыннăн чун-чĕри патне уйрăм çул-йĕр тупатăр, инвалидсемпе ветерансемшĕн, нумай ачаллă çемьесемпе пулăшусăр юлнисемшĕн шанчăкпа тĕрек пулса тăратăр. Вĕсене пулăшас тесе хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Вĕсен хуйхине чĕре çумне илсе, майсем тупса пулăшма тăрăшатăр. Çакна валли сирĕн чăтăмлăх, чун ăшши, ăшпиллĕхпе ăнланулăх – йăлтах çитет. Тавах сире çакăншăн. Эсир малашне те çакăн пек ырă кăмăллă пуласси, хăвăр тивĕçĕре кирлĕ пек пурнăçласси пирки эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, çăмăл мар ĕçĕрте иксĕлми вăй-хал, вĕçĕ-хĕррисĕр ырă кăмăл, телей, вăрăм кун-çул сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Ачасен канăвĕ**

## Каникул усăллă иртет

Хула тулашĕнчи лагерьсенче пирĕн районти 80 ача пĕрремĕш сменăра канать. Шкулсем çумĕнче йĕркеленĕ лагерьсенче вара тепĕр 1229 ача кунран кун мĕн те пулин интереслине, çĕннине пĕлсе вăхăта усăллă ирттерет. Çакă ашшĕ-амăшĕшĕн, паллах, пĕлтерĕшлĕ.

Ачасен канупа ĕç вăхăчĕ епле иртесси воспитательсенчен нумай килет. Çавăнпах пур шкулти воспитательсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Çапах та районти вĕрентӳ пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх уйрăмах Мăн Сĕнтĕрти (130 ача), Чуманкассинчи (105 ача) вăтам шкулсенчи лагерьсене ачасем кăмăлласах çӳрени паллă. Юнкăри, Нискассинчи, Орининти, Çатракассинчи тата Кашмашри шкулсем çумĕнче йĕркеленнĕ лагерьсен ĕçне те пысăк пахалăхпа туса пынине калаççĕ.

Çитес кунсенчех лагерьсен ĕç-хĕлне тĕрĕслессипе ятарлă комисси шкулсене çитсе курĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Граждансене йышăнаççĕ**

### «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене июнь уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
|---|---|---|
| Июнĕн 11-мĕшĕ | 13-15 сех. | В.Г. Данилов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ. |
| Июнĕн 15-мĕшĕ | 13-15 сех. | Ю.А. Иванов, район пуçлăхĕ, «Единая Россия» партин вырăнти уйрăмĕн политканашăн секретарĕ. |
| Июнĕн 18-мĕшĕ | 13-15 сех. | В.А. Калинин, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ. |
| Июнĕн 22-мĕшĕ | 13-15 сех. | И.В. Николаев, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. хуçалăхăн ертӳçи. |
| Июнĕн 25-мĕшĕ | 13-15 сех. | В.П. Морозов, «Россельхозцентр» федерллă патшалăх учрежденийĕн Чăваш Республикинчи филиалăн районти пай пуçлăхĕ. |
| Июнĕн 29-мĕшĕ | 13-15 сех. | С.С. Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕн В.А. Морозовăн пулăшаканĕ. |

**Спорта кăмăллакансем валли**

## Ăмăртусем курма чĕнетпĕр

Çитес канмалли кунсенче, июнĕн 12-13-мĕшĕсенче, Шупашкар хулинче Раççейри çăмăл атлетика ăмăртăвĕсем иртессине пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Тĕп хулари залив хĕрринче Раççейри спортсменсем хăвăрт утса мала тухассишĕн тата чемпион ятне илессишĕн вăй виçĕç. Шупашкара Раççейри тĕрлĕ регионтан 300 яхăн спортсмен килесси паллă.

Июнĕн 12-мĕшĕнче 9 сехет çурăра залив хĕрринче хĕрарăмсем 20 çухрăм ăмăртнă хыççăн 12 сехетре ăмăртăва савăнăçлă лару-тăрура уçаççĕ. 12 сехет çурăра 20 çухрăмлă старта арçынсем тухаççĕ. 17 сехет те 15 минутра «Олимпийский» стадионта хĕрсем 5 çухрăм, 17 сехет те 45 минутра яшсем 10 çухрăм хăвăрт утса тупăшĕç. Хыççăнах унта юниорсен ăмăртăвĕ те иртет. Вĕсен пурин те 10 çухрăмлă дистанцие парăнтарма тивĕ. Июнĕн 13-мĕшĕнче 9 сехетре залив хĕрринче арçынсем 50 çухрăмлă старта тухаççĕ. Çак чи йывăр старт хыççăн ăмăртăва залив хĕрринчех хупма палăртнă.

**Приглашает общественная приемная**

**С апреля 2010 года начала свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**
**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 12-14.**

Акатуй йыхравĕ: Ӳс, çĕклен, Муркашăмăр!

# Пĕрлехи ĕç туслă савăнăçа çаврăнчĕ

(Малалли. Пуçл. 1, 2 стр.).

Уява хутшăннисем çак кун çамрăк çемьесене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов социаллă тӳлев сертификачĕ панине те, профсоюз учрежденийĕсен республикăри комитечĕ Хисеп грамотипе чысланине те, Чăвашпотребсоюзăн Хисеп грамотине тивĕçнисене те курса савăнса ларчĕç.

Район çыннисем пушă вăхăта епле иртерни ял тăрăхĕсем Акатуя тăратнă ал ĕç выставкинче аван курăнчĕ.

Хăйсен пурнăçĕнчи пушă вăхăта спорт аталанăвне уйăракансем çак кун çумăрчченхи шăрăх çанталăка пăхмасăрах хĕрӳ кĕрешӳре вăй виçрĕç. Акатуя пынисем хаваспах волейбола вылякансен, çамрăк боксерсен юлташла тĕл пулăвне, кĕрешӳçĕсен ăмăртăвĕсене, турник çинче ăсталăх кăтартакансен номерĕсене, хĕрарăмсем тата арçынсем алă вăйĕ виçнине курса киленчĕç. Волейболла выляссипе «Моргаушрайбыт» командине çитекенни пулмарĕ.

Кăçалхи Акатуй та ытти çулсенчи пекех çĕнĕлĕхсемсĕр пулмарĕ. Халăхăмăр йăли-йĕркине, тăван ялпа харпăр хăй тăрăхĕсенчи предприяти-организацисен пурнăç çулĕпе, ял тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ паллă ентешсене сума сăвассипе тата вĕсене ыттисене кăтартассипе ял тăрăхĕсем кăçал ытти çулхисенчен активлăрах пулни курăнчĕ.

– Ял тăрăхĕнчен уява хамăн ăсталăха кăтартма тухма ыйтрĕç те, хирĕçлемерĕм. Кӳршĕ-аршăсемпе тăван-пĕтене хамăн тĕрĕсемпе савăнтарнисĕр пуçне Кунашкал выставкăсенех хутшăнманччĕ. Паян вара ытти ял тăрăхĕсене курнипе уява тухса йăнăшмарăм тесе шутлатăп. Пирĕн ялсенче ăстасем нумай иккен. Вĕсене кăтартма пĕлесси çеç уксахлать. Паян вара çак çитменлĕх те кун йĕркинчен тухса ӳкрĕ. Кунăн савăнмалла, – терĕ Суворов яч. хис. хуçалăх складовщици, виçĕ ача амăшĕ Елена Филимоновна Дмитриева.

Оринин ял тăрăхĕнчен килнĕ ал ĕç ăсти Вера Титовна Вершкова патĕнчен район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Алевтина Евстафьевна Андреева чылайччен уйрăлаймарĕ. «Кунашкал теттесене алăпа ăсталани хăех пысăк ăсталăх», – терĕ вăл çиппе çыхса тунă акăшсене алă çине илсе. Çатракасси ял тăрăхĕнчен килнĕ Марс Димитриев художникăн ĕçĕсем те куракансемшĕн хăйне евĕр парне пулчĕç. «Парне пама выранлă тесе Марс Михайлович енне укçа тăсакансем те куракансем хушшинче пĕр-ик çын çеç пулмарĕç.



*Муркаш ял тăрăхĕн кĕтесĕнче уява пынисем пир тĕртнине те, çăм арланине те курса паллашма пултарчĕç.*

Акатуй çумăрĕччен уява йĕркелекенсем те, курма пынисем те пĕтĕмлетӳ туса уйрăмах хастарсене тăвăллăн алă çупса чыслама ĕлкĕрчĕç.

«Тăван енри йăла-йĕркесемпе ял пуçланса кайнин историйĕсем тата вĕсене тытса пыракансем» выставкăра пĕрремĕш вырăна Муркаш ял тăрăхĕ йышăнчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче Катькассемпе Турайсем. «Тăван енри ырă йăла-йĕркесене упраса хăварни тата вĕсене аталантарни» номинацире Уйкас Янасалпа Оринин ял тăрăхĕсем малти ретре пулчĕç. Хорнуй ял тăрăхĕпе «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество тăрăшулăхне жюри «Хăйсен экспозицийĕсене ăнăçлăрах кăтартакансем» хак пачĕ. Ярославка ял тăрăхĕн – вĕренекенсен çулталăкне, Ильинка ял тăрăхĕн Б. Гузовский пултарулăхне халалланă экспозицийĕсем патĕнчен те курма пынисем тулли кăмăлпа иртрĕç.

Çак кун Акатуя пынисем «Ӳс, çĕклен, Муркашăмăр!», «Аслă Çĕнтерӳе – 65 çул» фотовыставкăсемпе савăнсах паллашма пултарчĕç.

Сцена çинчи художество пултарулăх коллективĕсен уяв номерĕсене пăхакансене те хамăр артистсен пултарулăхĕ куç умĕнчех ӳсни савăнтарчĕ. Художество пултарулăх коллективĕсем хушшинче иртерекен кăçалхи тупăшăва районĕпе 45 коллектив хутшăнчĕ. Вĕсенчен саккăрăшĕ Акатуй сцени çине тухма тивĕç пулчĕ. Камсем-ха вĕсем?

(Вĕçĕ 4 стр.).

# Техника юсавлăхĕ саккунлă пултăр!

«Симĕс ĕç çине» хатĕрленнĕ май

*Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен хирĕсенчи çур аки вăхăчĕ черетлĕ историе çырăнса юлнă май, малалах акнă хирсем симĕс кавирпе витĕнчĕç. Çакăнпа пĕрлех хресчен умне черетлĕ ĕç çи тухать: паян-ыран унăн выльăх апачĕ янтăлас ĕçе массăллăн кӳлĕнмелле. Ăна çителĕклĕ калăпăшпа та тулăх пахалăхпа иртерессипи ĕç çине мĕнле техникăпа тухнинчен нумай килет. Çакна шута илсе паян эпĕ ЧР Патшалăх техника надзорĕн Муркаш районĕнчи патшалăх аслă инспекторне С.А. НИКОЛАЕВА калаçăва чĕнтĕм.*

**– Сергей Александрович, ял хуçалăх предприятийĕсен аталанăвĕ çĕнĕ техникăпа тата технологипе çыхăнни каламасăрах паллă. Малашлăха пăхнă çĕрте техника пысăк пĕлтерĕшлĕ тесе эпĕ тĕрĕс калатăп-ши?**

– Çапла. Паян пирĕн пурнăçра техника тĕп вырăнта тăнине никам та хирĕçлеймест. Ял хуçалăхĕнчи кирек хăш ĕçе те вăхăтра пурнăçласси – пĕрлехи тĕллев. Çав ĕçпе хуçалăх экономикине курăмлă çĕклесси хуçалăх ĕçченĕсем хăйсен харпăрлăхĕнчи ял хуçалăх техникипе епле тухăçлă усă курнипе çыхăннă. Апла пулсан кунта çулленхи техника тĕрĕслевĕ малти вырăнта тăмалла, анчах...

Майăн 31-мĕшĕ тĕлне пирĕн патăмăрта регистрациленнĕ хăй тĕллĕн çӳрекен 849 машинăпа 308 прицепран 35 тата 28,2 процентĕ çеç техосмотр тухрĕç. Çу кунĕсем вăй илнĕ май уй-хир ĕçĕсем анлăлансах пыраççĕ. Акă умра «симĕс ĕç çи». Паянхи куна вара пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи 141 (62,4 процент) тракторпа 50 (33,8 процент) прицеп кăна хăйсем ĕçе хатĕррине техосмотр тăрса çирĕплетрĕç.

Каламалла, юлашки çулсенче уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи тракторсен йышĕ ӳссе кайрĕ: 476 единица тата 148 прицеп. Паянхи куна вĕсенчен 134-шĕ (28,2 процент) тата 35-шĕ (23,6 прцент) кăна техосмотр тăма пултарчĕç. Çакна валли хамăр енчен ĕçе йĕркелерĕмĕр пулсан та (хаçат урлă хамăр çирĕплетнĕ графика вĕсем патне малараха çитертĕмĕр, унпа килĕшӳллĕн кашни ял тăрăхнех çитрĕмĕр), техника хуçисем техосмотра васкаманни шухăшлаттарать-тĕлентерет. Вырăнта тухса техосмотр иртерес вăхăт вĕçленчĕ, анчах юсавлă мар техникăпа çул çине тухса саккуна пăсиччен трактор хуçисен хăйсен техникине халĕ Муркаша хăвалама тивет. Çакăн çине алă сулакансен саккун умĕнче ответ тытма тивесси пирки шутламалла пулать. Ял хуçалăхĕнчи ĕçсем юсавлă техникăпа каллал пынине курса-пĕлсе тăнă çинчех техосмотр тĕлĕшĕн тимлĕх сахал уйăракан хуçасем инкекпе вăйă вылянăн туйăнать. Хӳре вĕçне туй киличчен ку вăййа вĕçлемеллех.

**– «Симĕс ĕç çине» хутшăнмалли техника пирки тĕплĕнрех каласан ума мĕнле ӳкерчĕк тухать?**

– Савăнмалли кунта та сахал. Районта выльăх апачĕ хатĕрлемелли хăй тĕллĕн çӳрекен тĕрлĕ маркăллă машинăсем 15 единица. Вăл шутран курăк вакалатакан Е-281 марккăлли 3, Е-301, 302, 303 маркккăллă косилкăсем 8, КСК-100 маркккăлли 2 тата икĕ ДОН-680па пĕр КСК-600. Çак тата кăкарса çулмалли ытти техникăпа тухăçлă усă курсан эпир çитес хĕл валли çителĕклĕ апат хатĕрлейретпĕр. Анчах кунта вĕсене ĕçе хатĕрлесси пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май «симĕс ĕç çине» тухакан кашни техникăна техосмотр тăратса «Талон-Допуск» илмелле. Кунта вара пĕр çĕнĕлĕх те çук: тракторсемпе прицепсене техосмотра хатĕрленĕ пекех выльăх апачĕ хатĕрлемелли хăй тĕллĕн çӳрекен машинăпа ĕçлекенĕн çумра медосмотр справки, çав категорипе ĕçлеме удостоверени, вăл техникăна регистрациленине çирĕплетекен свидетельство, медицина аптечки, аварилле чарăну палли, вут-кăвартан сыхланма огнетушитель, шыв, кĕреçе, хăйăр тата шăпăр пулмалла. Уйрăм сăмах утă тавăракан агрегатсемпе косилкăсен тата пресс-подборщиксен çаврăнса ĕçлекен узелĕ-агрегачĕсем пирки. Вĕсем çинче ĕç хăрушсăрлăхне пăхăнса щитоксем, кардан-валсен хӳтлĕх кожухсем пулмалла. Тепĕр хут калатăп, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç юнпа ан пĕвентĕр тесен ĕç хăрушсăрлăхне пăхăнассине малти вырăна кăлармалла.

**– Иртнĕ çулсенчи «симĕс ĕç çи» мĕн кăтартса пачĕ тата халĕ каланисĕр пуçне мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмалла паян?**

– Каларăм ĕнтĕ, районти хуçалăхсенче паян выльăх апачĕ хатĕрлеме тухассипе ĕçлеççĕ. Кунта техника нумай кирлĕ, çынсем те пур чухне те çитсе каймаççĕ. Çавна май паянхи ĕçе ырана хăваракансем вăхăт çитсен юсавсăр техникăнах ĕçе хăвалаççĕ, ĕç вăхăтĕнче ĕçлекенсене вырăнтан вырăна куçарассипе йĕркелес ыйтупа малараха шутламаннисем трактор прицепĕсене çынсене лартса çӳреме усă кураççĕ, тĕрлĕ сăлтавсене пула тракторист удостоверенийĕсĕр тăрса юлнă механизаторсене пĕлсех «хурçă утсем» шанса пăраççĕ, техосмотр тăман трактор-прицепсенех ĕçе яваçтараççĕ. Çакă вăл инкек-синкек еннеллех утăмлани пулмасть-и-ха?..

Çуллахи каникул çитнĕ май утă типĕтсе купаланă, сенаж-силос хывнă çĕре шкул ачисем те сахал мар хутшăнаççĕ. Вĕсемпе вара питех те тимлĕ пулмалла. Ачасем хутшăнакан ĕçсене, сенаж-силос пусăрăнтарнă çĕре опытлă механизаторсене кăна çирĕплетмелле.

Хăш чухне выльăх апачĕ хатĕрленĕ тапхăрта КИР-1,5 косилкăпа симĕс массăна автомашина е трактор прицепĕ çине çулса тиенĕ чух массăна сапаласа тăма çӳле çынсене тăратнине курма пулать. Кун пекки пачах пулмалла мар.

«Симĕс ĕç çине» тухиччен унта ĕçлеме тĕплĕ хатĕрленнине нимĕн те çитмест.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

## Килти хушма хуçалăх

### Улмуççи тимлĕх ыйтать

Ялта пурăнаканăн пурнăçĕ кирек хăçан та улмуççирен катара тăман. Пурте çак йывăçа лартса ӳстерессипе, унăн тĕрлĕ сорчĕсене аталантарассипе, пан улмисене ытларах вăхăт упрассипе тупăшса ĕçлеççĕ. Тимлекенсен ăнăçăвĕсем те юнашарах. Вĕсенне хĕл касипех сĕтел çинче хăйсен пахчинче ӳстернĕ пан улмине курма пулать.

Тухăçлă пан улми туса илес текенсен те çак ĕçре хăйне евĕр вăрттăнлăхсене пĕлмелле. Вĕсем вара çуркуннерен пуçланаççĕ.

Çуркунне чечеке ларас умĕн улмуççин чăмăртаннă папкисем алла çыпăçнине эсир асăрханах ĕнтĕ. Халăхра çакна тепĕр чухне «пыл суни» теççĕ. Кусем – улмуççине сиен кӳрекен туй çĕленĕн (медяницăн) личинкисем. Вĕсем – пан улми йывăççин пĕррремĕш сăтăрçисем. Çакскерсем çурăлма хатĕрленекен папкана сырăнса унăн сĕткенне ĕмсе пурăнаççĕ. Çавна пула папка çеçкене ларассн, кайран çимĕç тĕвĕленесси пăчланать. Туй çĕлен личинкисем çамрăк турат çулçисене те çиеççĕ. Çак сăтăр хыççăн улмуççи вăйсăрланса юлать.

Тимлĕ пулсан улмуççи çеçке тăкнă хыççăн икĕ эрне иртсен ун тавра сарăрах симĕс вĕтĕ шăна вĕçме тытăнать. Ку вăл – ӳссе çитнĕ туй çĕлен. Çу касма вĕсем курăк ăшне вырнаççĕ. Çурла уйăхĕнче ку сăтăрçăсем каллех улмуççи çине куçаççĕ. Тепĕр çул çуркунне папка сăмсалан-малли тĕлте вырăн-вырăнпа сарă пăнчă пуррине асăрхама пулать. Кусем – туй çĕлен çăмарта сапнă вырăн.

Килти хушма хуçалăхран тата пахчаран хушма тупăш илес текеншĕн туй çĕлен – чăн-чăн тăшман. Çавăнпа та унăн личинкисене сийĕнчех пĕтерме тăрăшмалла. Ăна валли чир паллисем пур улмуççисем çине сийĕнчех хлорофос е карбофос сапмалла. 10 литр шыв пусне çак им-çама 20-30 грамм илни те çителĕклĕ. Ку ĕçе улмуççи çеçкене лариччен туса иртермелле пулсан туй çĕлен хунă вĕтĕ çăмартасене пĕтерме паян нитрофенпа усă курмалла (10 литр шыв пусне 250-300 грамм).

Çĕртме тата утă уйăхĕсенче улмуççисем хушшинче пĕр купа нӳрĕ улăма пĕр килограмм çурă табак тусанĕ сапса 2 сехете яхăн çунтарсан аван. Çак тĕтĕм туй çĕленне пĕтерет. Ку ĕçе кӳршĕсемпе пĕр вăхăтра туса иртерни вырăнлăрах. Унсăрăн туй çĕлен, çывăхра чĕрĕ юлнăскер, каллех сирĕн улмуççие сырăнма пултарать.

Малашлăха шанакан пахчаçă, çакна манса ан кай! Çеçке çурнă вăхăтра кирек хăш ӳсен-тăрана та химикатпа сирпĕтмеççĕ. Ку «ĕç» сăтăрçăсемпе пĕрлех шăркалантаракан хурт-кăпшанкăна та пĕтерме пултарать.

### Тавçăрулăх тата ăнăçу

Çĕр ĕçĕнче эпир пĕлмен вăрттăнлăхсем те нумай-ççке. Çак канашсем кунта пулăшу пулĕç. Акă:

– хăяр йăранне хĕвел çаврăнăшĕ лартсан хăяр тухăçлăхĕ ӳсет;

– çуркунне çĕрле тăм ӳкес хăрушлăх пур пулсан касхине йăрансене лайăх шăварăр;

– улмуççипе чие йывăççисене пĕрпĕринчен инçерех лартмалла, мĕншĕн тесен вĕсен тымарĕсем пĕр-пĕрне килĕштермеççĕ;

– улмуççи айне армути тата пилеш курăкĕ лартсан, вĕсем йывăçа улма хурчĕ тапăнасран сыхлĕç;

– тутăхнă кĕреçене хăйăрлă хутсăрах (наждак хучĕ), çурмалла каснă суханпах тасатма пулать;

– писес умĕн шыва кăштах уксус хушсан çĕр улми кăвак тĕслĕ пулмасть;

– крахмал сортлă çĕр улми тăвар хушса пĕçерсен те саланса каять. Ун пек çимĕçе пĕçернĕ чух тăварланă хăяр е купăста шывĕ, е кăштах уксус хушмалла.

**А. СЕМЕНОВ, пахчаçă-агроном.**

# Вăрăлла ĕç хакла ларать

**Следстви уйрăмĕнчен**

– Унта радиатор та пур тенĕччĕ-çке пичче, – аса илчĕ Эдуард пĕлĕшне кивçен илнĕ укçана Çĕнĕ çулччен тавăрса памалли çинчен шухăшласа. – Тен ăна сутса укçа тумалла? – вĕлтлетрĕ шухăш малалла.

Çапла шухăшласа вăл хĕллехи пĕр каç пиччĕшĕн машинипе (пиччĕшĕ шăпах çав кунсенче эрех ăшне «путнă» пулнă) Муркаш районне вĕçтерет.

Акă вăл Ярославка ялĕ. Çулне пĕрре килсе курнипе те аван астуса юлнă-ха арçын. Нумай пулмасть пиччĕшĕпе пулнăччĕ вăл кунта. Лешĕ кивĕ аккумуляторсем пухать, тĕслĕ тимĕр те пуçтарать.

Иртнинче çак яла килнĕ чух руль умĕнче Эдуарда ларма ыйтнăччĕ вăл. Пĕр кил патĕнче чарăнса пиччĕшĕ шала хуçипе кĕрсен Эдуард машинăрах ларса юлать. Евгений, Эдуардăн пиччĕшĕ, кăшт тăхтасан каялла кăмăлсăр таврăнать. Килнин усси пулмарĕ тесе машинăна ларать. Çула май çак кил хуçин кĕлетĕнче радиатор пуррине те, ăратлă сурăхсем ĕрчетнине те пĕлет шăллĕ. Радиатор пĕр 5 пин тенкĕне те кайма пултарнине пĕлсе Евгений кил хуçипе калаçса татăлманнишĕн хытах пăшăрханать. Тепĕр темиçе кунран вăл эрех ăшне «путать» те. Çавăнпах унăн машинипе шăллĕ ĕç тăвать, телефонне те хăйне илсе шăнкăравсем çине хуравлать...

Яла Эдуард çĕрлехи иккĕмĕш сехетре çитет. Машинăна кирлĕ вырăнта чарса палланă кил патнелле утать. «Пахча картинче пĕр хăма малтанах çукчĕ, çавăнтан кĕрес пулать», – шухăшлать арçын малалла утнăçемĕн. Кĕлет патне çывхарнă чух витере сурăхсем пуррине те чухлать вăл.

Кĕлет алăкне çăрапа питĕрменнине курсан хытах хĕпĕртет Эдуард – ĕçĕ сахалрах пулать-çке-ха. Шалта хунарпа çутатса радиатора çăмăллăнах тупать. Пысăк, анчах та йывăрах мар иккен. Килнĕ çулпах машина патне таврăнать. Радиатора машинăн малтипе хыçалти ларкăчсем хушшине вырнаçтарса хăварать, хăй багажникран вĕрен илсе каллех кил еннелле утать. Ку хутĕнче арçын витене кĕрет (кунта та çăран шăрши-марши те çук иккен). Алла лекнĕ пĕрремĕш сурăха илсе тухать, хыççăн сиксе тухнă путеке те хул хушшине хĕстерсе малалла утать. Машина патне çитсен путеке тӳрех багажника пăрахать, сурăха та урисенчен çыхса çавăнтах хурать. «Çĕрлехи сунарçă» Шупашкаралла çул тытать.

Ирхи 5 сехет тĕлнелле вăл хулана аванах çитет: çул çинче ăна никам та чармасть. Тӳрех тĕп пасара кайма шутлать «анлă» тавракурăмлă арçын. Машинăра кăшт ларнă хыççăн тухса тĕттĕмрех ӳтлĕ арçынпа «килĕшӳ» тăвать. Сурăхпа путеке Эдуард 3 пин тенкĕпе сутать. Малалла вара радиатор сутма урăх çĕре васкать арçын. Радиатора 1 пин тенкĕлĕх хаклаççĕ. «Юрать, ку та укçа», – тесе шухăшлать те кукăр алă япалана илекене тыттарать. Çапла майпа укçаллă пулса киле таврăнать.

Пиччĕшĕпе арăмĕн хваттерĕнче пурăннă вăл, çапах та унта çитсен пиччĕшне хăйĕн ĕçĕ пирки пĕр сăмах та каламасть.

Тепĕр темиçе кунтан пиччĕшĕн арăмĕпе унăн каллех Муркаш районне кивĕ аккумуляторсем туянма çула тухма тивет. Юнкăпуçĕнче кафене кĕрсен кĕтмен çĕртен вĕсене милици ĕçченĕсем чараççĕ. Машина пирки ыйтса пĕлсен «хăнасене» шалти ĕçсен пайне илсе килеççĕ. Часах кунта шăллĕпе арăмĕ Евгение те кĕтсе илеççĕ, тăкак тӳснĕ кил хуçисене те...

Следстви тĕрĕслĕхе çиеле кăларать, район сучĕ вара Эдуарда 90 пин тенкĕ штрафласа айăплама йышăнать.

**Л. ПЛЕЧОВА,**
**районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн следователĕ, юстици майорĕ.**

**Çар комиссариачĕ йыхравлать**

# Çар ĕçне вĕренес тесен

Раççей Федерацийĕн хĕç-пăшаллă вăйĕсенче контракт мелĕпе хĕсмет тăма сержантсемпе старшинасене хатĕрлесси тăтăшах пулса пырать.

Çавна май Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен уйрăмĕ кăçал та çар хĕсмечĕ хыççăн запаса тухнисен ретĕнчен Раççей Федерацийĕн Оборона министерствин вĕрентӳ учрежденийĕсене сержанта вĕренме каяс текенсене суйлать.

Специалистсем çарпа вĕрентӳ центрĕсенче тата пĕтĕмĕшле 18 вĕрентӳ учрежденийĕнче ăс пухĕç. Вĕсене тĕрлĕ специальноçа 2 çул та 10 уйăх вĕрентеççĕ. Кандидатсемпе вĕреннĕ тапхăра тата хыççăнхи 5 çуллăха çар службинче тăма контракт çыраççĕ.

Вĕренӳ вăхăтĕнче курсантсене кунне виçĕ хутчен тӳлевсĕр апатланупа, пурăнмалли вырăнпа, тумтирпе тата медицина пулăшăвĕпе тивĕçтереççĕ, уйăхра 8-20 пин тенкĕ чухлĕ стипенди тӳлеççĕ.

Вĕренсе пĕтернĕ хыççăн вăтам професси илни çинчен калакан диплом параççĕ, техник е взвод командирĕн должноçне çирĕплетеççĕ.

Кандидатсене çаксенчен суйлаççĕ: 19-23 çулта пулни, 11 çул вĕренни тата патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене тытни кирлĕ, çар службине юрăхлă пулни тата судпа айăпланманни.

Тĕплĕнрех ыйтса пĕлме Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен уйрăмне çак номерсемпе шăнкăравлама пултаратăр: 8(83541)62-3-50, 62-1-89, 62-7-01.

**В. АНДРЕЕВ,**
**Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

**Сывă пурнăç йĕркишĕн**

# Сывлăх – чи пахи

Çитĕнекен ăрăвăн сывлăхĕ тавра юлашки çулсенче сахал мар ыйту тухса тăчĕ. Ача садне çӳрекенсен сывлăхĕ те тепĕр чух хытах пăшăрхантарать. Çавăнпа та «Солнышко» ача садĕнче пĕчĕк пепкесен сывлăхне упрассине тата ăна çирĕплетессине тĕллевлĕ пурнăçласа пыраççĕ. Воспитательсем ачасене хăйсен сывлăхĕшĕн ăнланулăн тимлеме вĕрентеççĕ.

Паллă ĕнтĕ, ача аталанасси унпа юнашар мĕнле çынсем пулнинчен килет, аслисем мĕнле тĕслĕх кăтартнинчен. Çавăнпа та сывлăха упрасси, ăна çирĕплетесси çемьесенче малти вырăнта пулмалла. Сывлăхлă ача ытти енĕпе те лайăх аталанасси вара иккĕлентермĕ.

Сывă пурнăç йĕркине сарас тесе, ун çине тимлĕх ытларах уйăрас тесе ашшĕ-амăшĕсем хушшинче эпир апрель-май уйăхĕсенче «Пирĕн çемьери сывă пурнăç йĕрки» акци-конкурс ирттертĕмĕр. Вăл виçĕ тапхăртан тăчĕ. Пĕрремĕшĕнче çемьесем сывă пурнăç йĕркине тытса пынипе çыхăннă сăн ӳкерчĕк альбомĕсем, рефератсем, çемьери активлă канăвăн тата килĕштернĕ спорт тĕсĕн презентацине хатĕрлерĕç. Иккĕмĕшĕнче ашшĕ-амăшĕ ушкăнри ачасем умĕнче 15-20 минут тăсăлакан ăнлантару калаçăвне ирттерчĕ. Виççĕмĕш тапхăрта кашни çемье сывă пурнăç йĕрки çинчен калакан хаçат кăларчĕ.

Пурĕ çак интереслĕ конкурсра 16 çемье хăйне тĕрĕслерĕ. Çĕнтерӳçĕ ятне вара аслă ушкăна çӳрекен Юлия Егоровăн çемйи тивĕçрĕ. Иккĕмĕш вырăна 3 çемье тухма пултарчĕ: 2 кĕçĕн ушкăна çӳрекен Аня Паладьевăн, вăтам ушкăна çӳрекен Вика Рыбниковăн тата вăтам ушкăна çӳрекен Стас Лоцмановăн çемйисем. Виççĕмĕш вырăна тухакансем вара çаксем пулчĕç: аслă ушкăнри Святослав Ершовăн çемйи, сăпка ушкăнне çӳрекен Павел Смирновăн çемйи тата 1 кĕçĕн ушкăнри Дима Рыбниковăн çемйи.

**К. МАРКОВА,**
**аслă воспитатель.**

**Акатуй йыхравĕ: ӳс, çĕклен, Муркашăмăр!**

# Пĕрлехи ĕç туслă савăнăçа çаврăнчĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1, 2, 3 стр.).**

Уяв репортажĕ вулакансемшĕн тулли пултăр тесе кашнинех ятран палăртар-ха. Вĕсем: Москакассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуçăм» халăх юрăпа ташă ансамблĕ, Муркашри Культура çурчĕ çумĕнчи ветерансен хорĕ, Ярапайкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи «Екрем» фольклор ансамблĕ, Çурлатринчи ял клубĕнчи «Çеçпĕл» эстрада ансамблĕ, Мăн Сĕнтĕрти Культура çурчĕ çумĕнчи «Янаш» халăх юрăпа ташă ансамблĕ, Тойкилтĕри Культура çуртĕнчи «Çĕлхем» эстрада ансамблĕ, Калайкассинчи Культура çурчĕн юрăпа ташă ансамблĕ, Мăн Сĕнтĕрти «Картина» вокалпа инструмент ансамблĕ.

Акатуйрах Аслă Çĕнтерĕве халаласа иртнерĕ халăх пултарулăх фестивальне пĕтĕмлетрĕç. Кунта та пĕтĕмлетӳ тума çăмăл пулмарĕ. Апла пулин те халăх ансамблĕсем хушшинче Орининти «Шуракăша», Москакассинчи «Шуçăма», Мăн Сĕнтĕрти «Янаша» çитекенни пулмарĕ. Ташăпа юрă ансамблĕсем хушшинче Калайкассисем, Сыпайсем, Шетмĕпуççем палăрчĕç. Фольклор ансамблĕсенчен Ярапайкассинчи «Екрем», Муркашри «Муркаш», Мăн Токшикри «Тăванлăх» маттуртарах пулни курăнчĕ. Драма коллективĕсем хушшинче Кашмашсемпе Орининсене çитекенни пулмарĕ. Эстрада ушкăнĕсем хушшинче пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта Çурлатринчи тата Тойкилтĕри ансамбльсем. Уйрăм номинацисенче «Расна», «Картина», Муркашри ветерансен хорĕ палăрнă.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен суту-илӳ магазинĕсем Лантăш уçланкинче Акатуй уявне пухăннисене техĕмлĕ шашлыкпа, вĕри апатпа сăйларĕç. Суту-илӳ киоскĕсене меллĕ вырнаçтарни те уява пынисемшĕн питех те кăмăллă пулчĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, Акатуй район çыннисемшĕн чăн-чăн пысăк уяв пек иртрĕ. Паян вĕсем çанă таварсах «симĕс ĕç çине» кӳлĕнеççĕ. Апла пулсан кĕрхи тулăх кĕрекене пуçтарăниччен ăнăçу та пултарулăх сунар вĕсене!

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 26-38.**

* * *

**Ноябрьте пиллĕкмĕш пăруламалли ĕне сутатпăр. Тел.: 8-906-389-50-75.**

* * *

**Продается деревянный дом на вывоз. Тел.: 8-903-359-99-77.**

* * *

**Продается деревянный дом в разобранном виде, разм. 6,5мх6,5м. Тел.: 8-937-378-61-56.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

* * *

**Оказываем услуги крана, бульдозера, экскаватора, ямобура, автотранспорта. Реализуем вибропрессованные керамзитобетонные блоки. Тел.: (8352)58-05-06, 58-47-85, 45-65-35, мобильный: 8-903-359-62-85, 48-55-79. 1-3.**

* * *

**МУП ЖКХ «Моргаушское» предполагает осуществлять деятельность по сбору, использованию, обезвреживанию, транспортировке, размещению опасных отходов на территории Моргаушского района Чувашской Республики по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Ивановка.**
**Замечания и предложения по указанным видам деятельности просим направить по адресу: ЧР, с. Моргауши, ул. Коммунальная, д. 2. Тел.: (83541)62-6-37, 62-3-98.**
**Ответственное лицо: юрисконсульт Федорова А.В., тел.: 62-3-98.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 4-8.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира в с. Б.Сундырь, по ул. Советская, д. 11. Общей площадью 53 кв. м., с мебелью. Отопление индивидуальное, имеется хозблок. Цена договорная. Тел. : 45-57-70, 89278559636. 2-2.**

* * *

**Продаем торф, навоз, грунт, ОПГС, песок, щебень, асфальт с доставкой в короткие сроки. Оказываем автоуслуги. Тел.: 44-22-24, 8-905-343-91-07.**

* * *

**Аттестат Б0764672, выданный 25.06.04 г. Тойгильдинской СООШ на имя Соколовой Анны Валерьевны, считать недействительным.**

* * *

**Виççĕ пăруланă хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп, шурри ытларах. Тел.: 8-927-898-76-16, 68-7-41.**

* * *

**Сдается в аренду помещение по ул. 50 лет Октября (30 кв. м.) под офис или магазин. Тел.: 8-905-344-76-37. 1-3.**

* * *

**Сурăхсем, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.**




oriflame
**СУПЕРАКЦИЯ!**
**Стань звездой с ОРИФЛЭЙМ!**
**Зарегистрируйся в компании за 10 рублей с 7 июня по 10 июля 2010 года, выполни условия акции, получи гарантированный подарок – ЗВЕЗДНАЯ ПАЛИТРА ОТ АНИ ЛОРАК!**
**Тел.:+79063812560, +79520200029, 83541-62-7-73. 1-2.**

Муркаш райпо коллективĕ складра ĕçлекен Ю.А. Майковăн тăван

**ПИЧЧĔШĔ**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ

**Вера Васильевна**
**ЛЬВОВА**

пенсионерка, ĕç ветеранĕ, хисеплĕ колхозница вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта нумай çул директорта ĕçленĕ

**Иван Васильевич**
**СМИРНОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çывăх çыннисемпе тăванĕсем Сыпайри тĕп шкулта нумай çул директорта ĕçленĕ

**Иван Васильевич**
**СМИРНОВ**

вилсе кайнă пирки тарăннăн, чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.**
**Пичете панă 08.05.2010 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3980.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.